# МУРКАШ РАЙОНĔ – 75 ÇУЛ:

*Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин*

# ЛЮДМИЛА МАЙКОВА: «Ӳсĕмре кашни ĕçченĕн тӳпине куратăп»

***Мăн Сĕнтĕр райповĕн коллективĕ хăйĕн историне лайăх пĕлет тата унпа тивĕçлипе мухтанма пултарать. Çак предприяти чылай çул хушши район экономикин аталанăвне пысăк тӳпе хывать, яла хула шайне çывăхлатассипе, çыннăн потребитель ыйтăвне тивĕçтерессипе чылай тăрăшать.***

***Хальхи вăхăтра Мăн Сĕнтĕр райповĕ чылай отрасльлĕ хуçалăх системи пулса тăрать, унăн тытăмĕнче пуян пурлăх бази пур. Хăйĕн ĕçне предприяти чылай отрасльте аталантарса пырать: суту-илӳпе обществăлла апатланура, производствăпа хатĕрлев, аптека ĕçĕсенче, йăла услугипе, строительство таварĕпе тивĕçтерессинче. Предприяти 79 ялти 13 пине яхăн потребителĕн ыйтăвне татса парассишĕн тăрăшать. Акă мĕн каласа парать райпо канашĕн ертӳçи Л. Майкова:***

***– Чылай çул хушши пирĕн райпо – Раççейри Центросоюз системинчи потребитель обществисем хушшинче ăнăçлă ĕçлесе пыраканнисенчен пĕри, нумай кăтартупа – республикăри чи лайăх райпосен йышĕнче.***

***Эпĕ хамăрăн коллективпа чăннипех те хăпартланатăп. Патшалăх тата ведомство наградисене тивĕçнисем йышлăн, вĕсем – чăн-чăн профессионалсем. Эпир пĕрле чухне хамăр умри темĕнле йывăрлăха та çĕнтерме пултаратпăр.***

***Иртнĕ çулхи пĕтĕмĕшле ĕç-хĕлтен 423 миллион та 40 пин тенкĕ туса илнĕ. Ку вăл район таварçаврăнăшĕн 32 процентне танлашать. Иртнĕ çул суту-илӳ оборудованийĕпе предприятийĕсене реконструкцилеме 11 миллион тенкĕ уйăрнă, унччен хи çулта – 25 млн тенкĕ.***

***Пирĕн тĕп тĕллев – çынсен пурнăç шайне лайăххах тăвасси. Предприятин тепĕр ырă енĕ – ялти çынсен социаллă ыйтăвне – ĕç вырăнĕсемпе тивĕçтерессине – татса пама пулăшни. Хальхи вăхăтра предприятире тăватçĕр çынна яхăн тăрăшать. Пирĕн патра хăйсен ĕçне чунпа парăннă çынсем кăна тимлеççĕ.***

***Çакна та палăртса хăварас килет, хальхи вăхăтра та эпир çынсене хамăр пата ĕçлеме килме чĕнетпĕр. Пирĕн патра сутуçăсем, столовăй-кафесенче ĕçлекенсем тата ытти ĕç пурнăçлакансем валли ĕç вырăнĕсем пур.***

***Райпо ăнăçлăхĕ, апла пулсан пирĕн ĕçченсен пурнăç условийĕ, кунран-кун ӳссе пытăр. Уйрăм тав сăмахне пирĕн хисеплĕ ветерансем тивĕç, вĕсем хăйсен пĕлĕвĕпе вăй-халне райпо аталанăвне хывнă. Эпир вĕсен ырă ĕçне малалла тĕрĕс-тĕкел тăсма тивĕç.***



«Сундырь-Хлеб» заводăн коллективĕ.

## Çитĕнӳ çулĕ çăмăл килмен

### МАЛТАНХИ УТĂМСЕМ

1913 çулхи октябрь уйăхĕнче Хусан кĕпĕрнине кĕрекен Козьмодемьянск уесчĕн Мăн Сĕнтĕр салинче потребительсен кооперацийĕ уçăлнă. Мăн Сĕнтĕр райпотребсоюз тытăмне Калайкасси, Пушкăрт, Урпаш, Ярославка, Юнкă ялповĕсем кĕнĕ. Райпотребсоюз ĕçченĕсем Чăваш Енти 1921 çулхи выçлăхран çăлăнма тата ун хыççăн халăх хуçалăхне ура çине тăма пулăшнă.

1934 çулхи ĕç-хĕл пĕтĕмлетĕвĕпе Мăн Сĕнтĕрти райпотребсоюз таварçаврăнăш шайĕпе Чăваш Автономи Республикинче пĕрремĕш вырăна тухнă, куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава тивĕçнĕ. Коллективăн тăрăшулăхĕпе вăрçăчченхи тапхăрта потребкооперации пĕрлехи вăйлă хуçалăх организацийĕ пулса тăнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче асăннă райпотребсоюз районта хатĕрлев ĕçĕн тĕп организацийĕ шутланнă. Вăл фронтпа тылшăн тăрăшнă, вăрçă хирне ăсатма сухари пĕçернĕ, 20,5 гектар çĕр çинче тĕрлĕ çимĕç ӳстернĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче кооператорсем вăй-хăвата суту-илӳ ĕçне лайăхлатасси, предприятин пурлăх базине пуянлатасси çине уйăрнă.

1950-мĕш çулсен вĕçĕнче райпотребсоюз 4 ялпона пĕрлештернĕ, унта ваккăн суту-илĕвĕн 55 предприятийĕ кĕнĕ. Муркаш районĕ йĕркеленнĕ май, Муркаш райпотребсоюзĕ пулса тăнă, унта Муркаш, Сĕнтĕр, Ярославка ялповĕсем кĕнĕ. Вăл вăхăтсенче тавара ампар йышши сивĕ çуртсенче сутнă.

1960 – 1980 çулсенче Мăн Сĕнтĕр райповĕ палăрмаллах вăйлă аталанса пынă, çăкăр пĕçермелли завод, универмаг, гараж, складсем, столовăйсемпе магазинсем хута янă. Каярахри çулсенче суту-илӳ ĕçĕн пахалăхне лайăхлатассипе чылай тăрăшнă.

Тĕрлĕ çулта коллектива В. Колбасов, П. Петров, Л. Яндушкин, Я. Ершов, Н. Налимов, Д. Кариков, А. Харитонов тата ыттисем ăнăçлă ертсе йĕркелесе пынă. Предприяти ертӳçинче Л. Майкова 16 çул тăрăшать.

### СУТУ-ИЛӲ

Территоринчи потребительсен ыйтăвне 50 магазинпа обществăлла апатланăвăн 9 предприятийĕ тивĕçтерет, кашни объектра çĕнĕ йышши оборудовани вырнаçтарнă.

Пĕр çын пуçне тивекен таварçаврăнăш шайĕпе асăннă предприяти – Чăвашпотребсоюз системинче пĕрремĕш вырăнта. Объектсене сивĕтмĕшпе тивĕçтерни хăвăрт пăсăлакан апат-çимĕç продукчĕсене сутас шая 10 хут ытла ӳстерме май парать. Уйрăмах юлашки çулсенче строительство материалĕсене сутас калăпăш пысăкланса пырать. «Строительный двор» база ĕçлени те çынсемшĕн меллĕ, халăха пулăшассине тата таварçаврăнăша ӳстерет.

Ваккăн суту-илӳ таварçаврăнăшĕ район шайĕпе илес пулсан – 30 процент. Предприятин пĕтĕмĕшле ĕçĕн 72 процентне шăпах та ваккăн суту-илӳ йышăнать.

### ОБЩЕСТВĂЛЛА АПАТЛАНУ

Район шайĕпе илес пулсан, предприятин обществăлла апатланăвĕ 50 процентпа танлашать, предприятире çак сфера – 13 процент. Асăннă отрасльте иртнĕ çул, унччен хипе танлаштарсан, 11, 2 процент ăнăçлăрах ĕленĕ.

Потребительсен ыйтăвне обществăлла апатланăвăн 9 предприятийĕ тивĕçтерет, кашни объектра – çĕнĕ йышши оборудовани. Обществăлла апатлану отраслĕ енĕпе предприяти Чăвашпотребсоюзра малтисен йышĕнче. Сутлăхра вырăнти продукци 67,8 процент йышăнать. Кафе-столовăйсенчи менюра тĕп вырăнта чăваш наци апат-çимĕçĕ.

Иртнĕ çул обществăлла апатлану сферинче 356 825 пин тенкĕ илнĕ. Мăн Сĕнтĕр райповĕн предприятийĕсене республика тата пĕтĕм Раççей шайĕнчи наукăпа практика конференцийĕсен тĕп бази шайĕнче те усă кураççĕ.

### ПРОИЗВОДСТВО

Предприяти ĕçĕ-хĕлĕн 7 процентне производство йышăнать. Кунта «Сундырь – Хлеб» çăкăр завочĕ ăнăçлă ĕçленине палăртмалла. Унăн тытăмĕнче çăкăр пекарни, кондитер, макарон тата напиток хатĕрлесе кăларакан цехсем пур. Çак предприяти, Чăвашпотребсоюз системипе илес пулсан, ăнăçлă ĕçлесе пыраканнисен йышĕнче.

Кунта 150 ытла тĕрлĕ продукци хатĕрлесе кăлараççĕ. Иртнĕ çул çăкăр пĕçерекен заводра 28735 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă, 373,7 тонна çăкăр тата çăкăр-булка изделийĕ, 56,4 тонна кондитер изделийĕ, 31630 декалитр пылак шыв хатĕрленĕ. Хăш-пĕр ĕç кăтартăвĕ, унччен хи çулхисемпе танлаштарсан, пысăкрах.

Предприяти халăха йăла ыйтăвĕпе тивĕçтерсе социаллă ĕç пурнăçлать. Кунта парикмахерски, аптека, прокат уйрăмĕ, столяр цехĕ тата çакăн йышши ытти цех ĕçлет.

### ХАТĔРЛЕВ ĔÇĔ

Потребкооперацин чи кирлĕ енĕсенчен пĕри вăл – хатĕрлев ĕçĕ. Пĕтĕмĕшле ĕç-хĕлĕн 8 процентне çак ĕç йышăнать. Иртнĕ çул çак отрасльтен 35139 пин тенкĕ илме пултарнă. Çак енĕпе хатĕрлевçĕсем кăна мар, ялти лавккасем те ĕçлеççĕ. Хатĕрлев отраслĕн ассортименчĕ пысăк: аш, сĕт, çĕр улми, пахча çимĕç, çăм тата ытти те.

Сĕт сивĕтмелли танкер вырнаçтарни те ĕç тухăçлăхне ӳстерме май парать. Виçĕ сехет хушшинче вăл 10 тонна таран сĕт сивĕтме пултарать.

### КАНУРА ТА САТУР, СПОРТРА ÇИВĔЧ

Райпо коллективĕ ĕçре кăна мар, канура та, спортра та ырăпа палăрса тăрать. Предприятин хастар çыннисем районăн тата Чăвашпотребсоюзăн обществăлла пурнăçĕнче те пуçаруллă та активлă. Райпо профсоюз комитечĕ ĕçлекенсен канăвне усăллă ирттерессишĕн тăрăшать.



Мăн Сĕнтĕр райповĕн продукци ассортименчĕ питĕ пуян.

# ИРТНИСĔР МАЛАШЛĂХ ÇУК

*тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçа кĕрет*

# Унăн çунатти айĕнчен патриотсем «вĕçсе» тухаççĕ



**Района чапа кăларакансем – кунта ĕçлесе пурăнакан çынсем, вĕсен пултарулăхĕпе никĕсленнĕ çĕнĕрен те çĕнĕ ÿсĕмсем. Çакăн пек хастар çынсенчен пĕри – вĕренӳ сферинче пысăк çитĕнӳсем тума пултарнă, паянхи кун та çав ăнăçу çулĕпе пыракан учитель – Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле пĕлĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕн ятне тивĕçнĕ Владимир Львов. Вăл – Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ те, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ те. Унăн ĕçне хаклакан пысăк награда нумай, анчах та нумайăшĕ ăна Муркаш шкулĕнче ОБЖ предметне вĕрентнипе тата «Родина» çарпа патриот клубне йĕркелесе ярса паян та çӳллĕ шайра тытса пыма пултарнипе пĕлет.**

Владимир Гурьевич ачасемшĕн чи малтанах учитель паллах. Унпа пуçарнă калаçу вăхăтĕнче (Муркаш шкул тирĕнче ачасем зачет паратчĕç) ачасем вĕрентекенĕн требованийĕсене, çирĕплĕхне хăнăхса çитни, шăпах çак паха енсемшĕн хисепленине курма, туйма пулчĕ. Çапах та Владимир Гурьевич вĕренекенсемшĕн юлташ тата ăслă-тăнлă сĕнӳ пама пултаракан аслă ăрури çын пулни те яр уççăн курăнчĕ.

1947 çулта Ятман ялĕнче çуралнăскер, вăл хăй те Муркашри вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Анчах та Совет çарĕнче хĕсметре тăнă хыççăн шкула «çитиччен» унăн çулĕ парти ĕçĕпе, пурнăçĕпе тачă çыхăнса пынă. Муркаш шкулĕнче вăл 1985 çулта военрукра вăй хума тытăнать. Кĕскен каласан, Владимир Львовăн ĕçĕ кулленех çирĕп дисциплинăпа çыхăнса пырать.

Вăл вăхăтра Муркаш шкулĕнче педагогсен коллективĕ хальхи пекех пысăк пулнă. Директорта В. Ялушкин вăй хунă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсем – пур шкулта та ачасем йышлă пулнă тапхăр. Çавăнпа 1987 çулта Муркашра 1176 ача вĕренмелĕх çĕнĕ шкул тума тытăнаççĕ. Палăртмалла, тепĕр çулхинех ăна савăнăçлă лару-тăрура уçаççĕ.

Владимир Гурьевич каланă тăрăх, вăл вăхăтра ачасене строй хатĕрленĕвне иккĕмĕш класранпах вĕрентме пуçланă. Муркаш шкулĕнче те пине яхăн ача, класс чылай пулнине шута илсен, учтелĕн çар пурнăçне самаях аса илме тивнĕ.

– Строй хатĕрленĕвĕн урокĕсене волейбол, баскетбол вăййисен площадкинче irttерме тивнĕ. Военрукăн яланах формăпа çӳремелле пулнă. Çар çи-пуçне вара Муркашра сутман. Шупашкарта та тупма йывăрччĕ. Çапла мана Мускава çар тумне илме ячĕç. Çапах та юрăхлă калпак тупса илме пулмарĕ. Ăна вара Шупашкара таврăнсан вырăнти çар чаçĕнче тупса тăхăнтăм. Çапла формăллă военрук пулса тăтăм, – аса илет Владимирь Гурьевич.

Вăхăт иртнĕçемĕн çар хатĕрленĕвĕн урокĕсем пăрахăçа тухса пыраççĕ, шкул программине ОБЖ предметне кĕртеççĕ: 1991 çулта 1–2, 6–7, 10–11 классенче вĕрентме тытăнаççĕ, 1994 çултанпа – пур класра та. Учителе халран каймалăх та пулнă...

ОБЖ предмечĕн пĕлтерĕшĕ пысăкки каламасăрах паллă – çыннăн кирек хăçан та чи малтанах хăйне хăрушсăрлăхпа тивĕçтерме пултармалла, пурнăçри йывăр лару-тăрăва та хатĕр пулмалла. Ку енчен пăхас пулсан, ОБЖ чи кирлĕ предмет тесен те йăнăш мар.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Владимир Львовăн вĕренекенĕ Ярослав Илларионов çак предметпа шкул ачисен пĕтĕм Раççейри олимпиадин призерĕ пулса тăчĕ. Ку вĕренӳ çулĕнчи олимпиадăн регион тапхăрне унăн пилĕк вĕренекенĕ хутшăнчĕ.

Халĕ вара ОБЖ предметне 8, 10–11 классенче кăна вĕрентеççĕ. Çапах та ку пачах та вĕрентекенĕн пушă вăхăт нумаййине пĕлтермест. Мĕншĕн тесен 2006 çулта вăл, шкулти «Орленок» ушкăнĕн ачисен шухăш-кăмăлне шута хурса, «Родина» çарпа патриот клубне йĕркелесе яма пултарнă. Халĕ çак клуба районта кăна мар, республикипех питĕ лайăх пĕлеççĕ. Çарпа патриот клубĕсен республика ăмăртăвĕсенче муркашсем яланах малти вырăнта, клуб йĕркеленĕренпе çак таранччен 2-мĕш тата 4-мĕш вырăн йышăнни те пĕр-икĕ хут кăна пулнă.

2018 çулта акă «Родина» Брянск хулинче иртнĕ федерацин тĕп округĕн çарпа патриот клубĕсен тата çамрăк армеецсен слетне хутшăнчĕ. Муркаш çамрăкĕсем пĕтĕмĕшле кăтартупа унта хутшăннă чылай командăна хыçа хăварса 1-мĕш вырăна тухма пултарнă – Чăваш Ен ятне каллех çӳле çĕкленĕ.

«Родина» клуба Владимир Гурьевичăн «ачи» теме те пулать. Ăна вăл питĕ пысăк тимлĕх уйăрать. Мĕн тĕрлĕ кубок çук пулĕ клуб çитĕнĕвĕсен сентри çинче, кашнинех ăс-тăна кăтартса, тар кăларса çĕнсе илнĕ. Парашютпа сикнĕ ачасен шучĕ те клубра 130-тан иртнĕ иккен. Çапла, Владимир Львовăн вĕренекенĕсем тӳперен çĕре тивĕçлĕ вĕçсе анма та, унăн çунатти айĕнчен тухса анлă пурнăçа тивĕçлĕ «вĕçме» те пултараççĕ. Апла та, капла та – Муркаш, Чăваш Ен ятне çӳле çĕклеççĕ.

# Телейне сцена çинче тупнă

**Вăл е ку производствăра ĕçлеме пĕлекенĕн хушăран халăхпа пĕрле пулса канас та килет. Ку канăва вара эпир нумай чух сцена ăстисемсĕр курмастпăр. Çавăнпа та ташлама-юрлама, шӳтлеме е музыка инструменчĕпе ыттисене килĕшӳллĕ выляса савăнтарма пĕлекен – яланах хисепре. Раççей Президенчĕ В. Путин кăçал хамăр çĕршывра Театр çулталăкне irttерме йышăнни çав ăстасене тивĕçлипе чыслани пулать тесе шутлатăп.**

Сцена ăстисем пирĕн районта та сахал мар. Пĕрисем клубсенчи сценăсем çинче кăмăллă спектакльсем лартаççĕ, теприсем пĕрлехи кану вăхăтĕнче ĕç çыннисене илемлĕ ташă-юрăпа савăнтараççĕ, кĕвĕ инструменчĕпе ăста выляса лайăх кану йĕркелесе параççĕ.

Театр çулталăкĕпе çыхăннă манăн паянхи сăмахăм Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Кӳстерекре çуралса ӳснĕ, кунтах тĕпленнĕ Аликпа Владислав Димитриевсем пирки. Вĕсен сцена çинчи ăсталăхĕ ачалăхăмранах куç умĕнче. Пиччĕшĕпе шăллĕн пултарулăхне, вун-вун çул каяллахи пекех, паян та ял çыннисем кĕтеççĕ, вĕсемпе пĕрле савăнаççĕ, юрлаççĕ, канаççĕ.

– Епле пуçланнă-ха сирĕн юрă-кĕвĕпе туслашасси, ăçта унăн никĕсĕ? – кăсăкланатăп черетлĕ юрă юрласа сцена çинчен аннă артистсемпе. Кунта вĕсен хуравĕ ашшĕ-амăшĕ патĕнчен пуçланчĕ. Ялта пĕрлешӳллĕ хуçалăх тимĕрçинче ĕçленĕ ашшĕ Геннадий Димитриевич çамрăклах балалайкăпа туслă пулнă. Унăн мăшăрĕ Вера Ивановна вара юрă маçтăрĕччĕ. Ĕçкĕ-çикĕре ăна çитекен те çукчĕ. Çакăн пек çемьере ӳсекен ачасем Валентина тата Аликпа Владислав артист пултарулăхне аталантарнинчен тĕлĕнме кирлех-и тата? Çук пулĕ.

Ашшĕ пĕрремĕш ĕç укçипе хут купăс туяннине хĕрĕпе ывăлĕсем лайăх астăваççĕ. Çавăн чух пуçланчĕ ĕнтĕ ывăлĕсем кĕвĕ инструменчĕпе туслашасси. Çулсем иртнĕ май вĕсем кашниех хăйсен пурнăç çулне тупрĕç, çемье çавăрчĕç. Анчах юрă-кĕвĕрен нихăшĕ те инçе пăрăнса каймарĕç. Чăваш патшалăх университетĕнче физикăпа математика факультетĕнчен вĕренсе тухнă Валентина Геннадьевна паян, хăй тивĕçлĕ канурине пăхмасăрах, Шупашкарти МТВ центрта суту-илӳ вырăнĕ тытать.

Эсир **сăн ӳкерчĕкре** куракан Аликпа Владислав Димитриевсем **(сулахайран сылтăмалла)** вара ашшĕ-амăшĕн юратнă ĕçне чунĕпе малалла тăсса хăйсене валли специальноç суйласа илнĕ. Вĕсем иккĕшĕ те тĕрлĕ çулта И. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн музыкăпа педагогика факультетĕнчен вĕренсе тухнă.

Алик Геннадьевич аслă пĕлĕве çирĕплетекен диплома илсенех 1978 – 1981 çулсенче Орининти вăтам шкулта, кайран Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта ачасене юрă-кĕвĕ тĕнчипе утма вĕрентнĕ.

– Манăн мăшăрăм та учитель. Галя Нискассинчи вăтам шкулта, хыççăн Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта ачасене биологипе хими предмечĕсене вĕрентрĕ. Хĕрпе ывăл ӳстертĕмĕр. Халĕ пирĕн 5 мăнук. Мăшăрăм вĕсене пăхассине хăй çине илчĕ. Мана вара паян та тăтăшах концертсене чĕнеççĕ. Куракансем савăнса алă çупнине куратăп та сцена çинчен анас та килмест, – терĕ вăл сăмаха шăллĕ çине куçарса.

1959 çулта çуралнă Слава та ачаллах юрă-кĕвĕпе туслă ӳснĕ. Çавăнпах вăл та пиччĕшĕнчен тĕслĕх илсе вăтам шкул хыççăн И. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн музыкăпа педагогика факультетне вĕренме кĕрет. 5 çул сисĕнмесĕрех иртет. Диплом илсен ăна Мамăшри вăтам шкула музыка тата организатор учителĕ пулса ĕçлеме яраççĕ. 10 çул вăй хурать вăл ку коллективра. 1990 çулта вара Владислав Геннадьевича Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьелти вăтам шкула ертсе пыма шанаççĕ. Кунта хăйĕн тивĕçне пурнăçланă хыççăн Кӳстерек каччи тăван ене таврăнать. Ялти Культура çуртĕнче, ача садĕнче ĕçлеме пуçлать. Çав вăхăтрах, пиччĕшĕ пекех, самантлăха та юрăран, сцена çине тухассинчен пăрăнмасть.

– Хамăр пурнăçа урăхла курмастпăр эпир. Пирĕн тĕллев – ялта пурăнакансене юрă-кĕвĕпе савăнтарасси, вĕсен ĕçлес кăмăлне çĕклесси. Çынсен куçĕнче çакна асăрхасан эпир хамăрăн ĕçĕмĕре тунă тесе шутлатпăр, – терĕ хут купăс калама чарăнса Владислав Геннадьевич. 2012 çултанпа Шурчари художество пултарулăх коллективне ертсе пыраканскер, вăл пурнăçра хăйĕн вырăнне тупнă тесе вĕçлетĕп хамăн калаçăва.



Шăпах çакăн пек çынсем çыраççĕ те ĕнтĕ район историне.

**Кăларăма хатĕрлекенсем: Р. Макарова, А. Белов, В. Шапошников, Н. Николаева.**